Есир тӗнҫе ҫутти (Мѳ. V, 14).

Сирӗн ҫуттӑр ҫынсенӗн умӗнҫе ҫутаттӑр, вӗсем сирӗн ырӑ ӗҫӗрсене курса сирӗн ҫӳлти Аҫӑра мухтаҫҫӑр (Мѳ. V. 16).

Ќам заповѣдсене тытса тӑрсан, ҫынсене те вӗрентсен, вӑл ҫӳлти патшалӑхра асли пулӗ (Мѳ. V, 19).

# ЖИТІЯ СВЯТЫХЪ Гурія, Германа и Варсонофія, ПРОСВѢТИТЕЛЕЙ КАЗАНСКИХЪ.

На чувашскомъ языкѣ.

Изданіе діакона села Можарокъ, Цивильскаго уѣзда, Казанской губерніи, Стефана Ефремова.

Казань.
Центральная Типографія
1910 г.

Таса, ырӑ, йӑваш кӑмӑллӑ, тӳсемлӗ пулӑр, пурне те йуратса пурӑнӑр.

# Житія святыхъ Гурія, Варсонофія и Германа Казанскихъ чудотворцевъ.




Мускавран инҫе мар, пӗр Радонеж йатлӑ хулара, Григорій Руготин улпутӑн ывӑл ађа ҫуралнӑ. Тӗне кӳртнӗ ђух ӑна ашшӗ йађӗпе Григорій йатлӑ хунӑ. Ашшӗ пуйан мар пирки, Григорій

çамрăклах, пĕр Іоанн Пеньков княç патĕнҫе ĕçлесе пурăннă. Григорій пит ырă, ăслă, йăваш кăмăллă пулнă, ҫиркĕве пĕр майах çўренĕ, хăйне Турă умĕнҫе таса усрасшăн, йаланах Турра кĕлтуса, типĕ тытса пурăннă. Турра йурасшăн, хăйĕн пурлăхне наҫар çынсене, ыйткалакансене парса пурăннă.

Григорійе, ырă пурăннăшăн, Пеньков улпутпа арăмĕ иккĕшĕ те питĕ йуратнă. Ăна шанса мĕн пур кил-çуртне пăхса тэма унăн аллине панă. Вăл вĕсен мĕн пур пурлăхне те питĕ лайăх пăхса усранă.

Шуйттан таса пурăнакан çынна кураймасť, йепле те пулсан ăна пĕтересшĕн тăрăшаť. Вăл сăваплă Григорійе те курайман. Шуйттан Григорійе, нимĕнле те çĕнтереймен пирки, Пеньковăн урăх тарçисем ăшне усал шухăш кўртнĕ. Çав тарçăсем Григорійе, хăйсенҫен асла тухнине курай масăр, йепле те пулсан хăйсенҫен малалла йарас мар-ҫҫĕ тесе тăрăшнă. Вĕсем Пеньков улпута Григорій çинҫен, вăл санăн арăмупа йерсе пурăнаť тесе, елеклесе кăтартнă. Улпут çавна ĕненнĕ те, ĕçе ыйтса пĕлмесĕрех, Григорійе вĕлерме хушнă. Улпутăн ывăлĕ питĕ ăслă çын пулнă. Вăл ашшĕне елек паракансенĕн сăмахне тăруках ĕненме хушман. Хăй Григорій çинҫен тĕпĕ—йĕрĕпе ыйтса пĕле пуçланă. Григорій айăпсăрри çинҫен пĕлнĕ те, ăна вилĕмрен хăтарнă. Çапах та улпут, çиллине çавăраймасăр, Григорійе çĕре нўхреп пек ҫавса, пура йарса тутарнă тарàн шăтăка хуптарнă. Вăл шăтăка çутă çўлтен пĕр пĕҫĕк ҫўреҫерен анҫах кĕнĕ, çавăнпа унта тĕттĕм пулнă. Григорій хăйпе пĕрле шăтăка Турă Амăшĕ сăнне илсе кĕнĕ. Пеньков улпут шăтăк патне хурал тăратнă. Григорійе çиме çăкăр паман, виçĕ кунта пĕр сĕлĕ кĕлти анҫах панă. Çав тĕрлĕ хĕн-асапра Григорій икĕ çул пурăннă. Вăл çав хурлăха пĕрре те Турра ўпкелемесĕр, Турă манăн ҫунăма çăласшăн çак хурлăха кăтартаť пулĕ тесе, тўснĕ. Григорійĕн пĕр йулташĕ, вăл çав тĕрлĕ хĕн-асапра пурăннине пĕлсен, шăтăк патĕнҫе тăракан хуралçа Григорійпе сăмахлама ирĕк пар тесе тилмĕрнĕ. Хуралçă ăна ҫарман. Йулташĕ Григорійе кашни кун апат пырса парам, тенĕ. Григорій апат илсе пыма хушман, апат вырăнне хутпа чернил, хур шăмми пырса пама хушнă. Йулташĕ вара пырса панă. Григорій аҫасене вĕрентмелли сасă паллисем (азбука) çырса, сутма пара-пара йанă. Илнĕ укçине ыйткалакансене валеçсе пама хушнă. Икĕ çул иртсессĕн, ырă кăмăллă Турă, унăн айăпсăр тўсĕмлĕхне курса, ăна хĕн-хур-

лăхран çăлса кăларма кăмăл тунă. Пĕрре, Григорій Турра кĕл-туса тăнă вăхăтра, сасартăк алăк уçăлса пăртак çутă кĕнине курнă. Çавна курсан вăл хăраса кайнă. Мана вĕлерме килеççĕ пулĕ тесе шухăшланă, мĕншĕн тесен алăка икĕ çул хушшинҫе пĕрре те уçман. Вăл Турра тата хытăрах кĕл-тăва пуçланă. Анҫах çутă тата ытларах курăна пуçланă. Григорій алăк патне пынă та, сĕр-тĕнсе пăхнă, алăк вара йартах уçăлса кайнă. Григорій вара çак ĕç Турă ирĕкĕпе пулнине пĕлнĕ те, Турра тав-туса, Турă Амăшĕ сăнне илсе шăтăкран тухнă. Çак ĕç кăнтăрлах пулвă, çапах та ăна Турă хăваҫĕпе никам та курман. Вара вăл Волоколамскій тийекен Турă Амăшĕ ку тĕнҫерен куçнă йаҫĕпе тунă монастыре кайса унта монаха кĕнĕ. Монаха кĕрсен ăна Гурій йат хунă. Унăн питĕ тĕлĕнмелле ырă пурăнăçне курса, пуçлăхсем ăна çав монастырех игумена кӳртнĕ. Игуменра вăл вунă çул пурăннă. Питĕ хытă типĕ тытнипе унăн сывлăхĕ пĕтнĕ. Çавăнпа вăл вунă çул иртсен Турра кĕл-туса пĕҫҫен икĕ çул пурăннă. Унăн ырă пурăнăçĕ çинҫен ҫап сарăлнă. Иван Васильевич патша таса Гурійе Селижаров Троицкій монастырĕнҫе игумен вырăнĕ панă. Унта Гурій пĕр çул анҫах пурăннă. Турă ăна урăх пысăк ĕç тума суйланă.

Турă пулăшнипе Іоанн Грозный патша Хусана тутарсенҫен çĕнтерсе илнĕ. Унта тутарсем, ҫăвашсем, çармăссем, ытти тĕрлĕ ҫăн Турра пĕлмен çынсем пурăннă. Çав çынсене Христос тĕнне вĕрентме, апостолсем пек, сăмахпа та ĕçпе тăрăшакан çын кирлĕ пулнă. Çавăнпа, Хусана архіерей йама канаш тусассăн, питĕ ырă пурăнăçлă тăваттă çын суйланă. Вĕсенĕн хушшинҫе пĕри таса Гурій пулнă. Хусана архіерейе кама кӳртмеллине Турă Хăй кăтарттăр тесе шăпа йанă.

Турра кĕл-тунă та архіерейсем шăпа илнĕ. Шăпа таса Гуріе тухнă. Митрополитпа архіерейсем çавăншăн Турра тав тунă та 1555-мĕш çулта кĕçĕн кăрлаҫăн (февралĕн) çиҫҫĕмĕш кунĕнҫе ăна архіерей тивлетне панă. Вара таса Гурійе патшапа митрополит, архіерейсемпе мĕн пур священниксем Турра кĕл-туса Хусана ăсатса йанă. Хусанти тĕне кĕмен халăхсене вĕрентсе тĕне куртме Гурійе пулăшмашкăн, ăна икĕ таса пурăнăçлă çын суйласа панă: пĕри Герман-архимандрит, тепĕри Варсонофій-игумен пулнă.

Сăваплă Гурій Хусана Мускав шывĕпе Атăл шывĕ тăрăх кайнă. Мускавпа Атăл шывĕ хĕррин҆ҫи хуласемпе йалсене кĕре—кĕре молебен туса Турă шывĕ сапа—сапа хăварнă.

Шупашкар хули вырăнне ҫитсен вăл ҫарăннă та, халĕ Собор ҫиркӳ тăракан вырăна пир ҫиркӳ лартнă. Шыва кĕл-туса тасатнă та хула тавăра сапса ҫавăрăннă. Вара куҫарса ҫӳрекен пир ҫиркĕве тавăрăнса литургія кĕлли тунă. Кайран халăха ырă сăмах каласа Владимірскій тийекен Турă амăшĕ сăнĕпе пилленĕ. Вăл турăш (икона) халĕ Шупашкарта Собор ҫиркӳнҫе ларать. Унтан нумайĕшĕ халĕ те пулăшу кураҫҫĕ.

Ҫĕртме уйăхин (Іюлĕн) ҫирĕм ҫиҫҫĕмĕш кунĕнҫе, ирхине Св. Гурій Сĕве хулине пынă; унта ăна священниксем турăшсемпе (иконасемпе) хирĕҫ тухса илнĕ. Св. Гурій Турă Амăшĕ йаҫĕпе тунă Собор ҫиркӳне кĕрсе шыва тасатакан кĕлĕ тунă та, Турă шывĕпе хула йĕри тавăра сапса ҫавăрăннă; сапса пĕтерсен ҫиркĕве тавăрăнса литургія кĕлли тунă.

Ҫĕртме уйăхин (Іюлĕн) 28-мĕш кунĕнҫе сăваплă Гурій Хусана ҫитнĕ. Мĕн пур Хусанти священниксем ăна хирĕҫ тухса илнĕ. Таса Гурій ҫиркӳре кĕл-тунă ҫух тăхăнакан архіерей тумтирĕсене тăхăнса Собор ҫиркӳне кайнă.

Ҫиркӳре Турра кĕл-тунă та Хусан йĕри тавăра Турă шывĕ сапса ҫавăрăнма кайнă. Хула тавăра ҫавăрăнса пĕтерсен, хулана тăвата йенелле хĕреспе пиллесе: „мĕн пур Хусан пăханĕнҫи тутарсене, ҫăвашсене, ҫармăҫсене хĕрес хăваҫĕпе Турă Хăй йенне ҫавăртăр-ҫҫĕ“ тесе кĕл-тунă. Вара ҫиркĕве тавăрăннă та, литургія кĕлли тунă; литургія кĕллине пĕтерсен халăха ăнлантармалла сăмах каланă. Вăл вăхăтра Хусанта вырăс сахал пулнă; вăрҫăран йулнă салтаксемпе ҫинлă ҫынсем анҫах пулнă. Ыттисем пурте тутарсем пулнă. Ҫавăнпа таса Гурійе ҫав тĕрлĕ хытă ҫĕрелле ҫынсене Турă сăмахне ăнлантарма пит хĕн пулнă. Гурій атте ҫамрăкранпах хăй ирĕкĕпе пурăнман, Турă ирĕкĕпе пурăннă. Христос тĕнĕ сарăлтăр-ҫĕ тесе, Хусана пыни икĕ ҫул ҫитсен, Иван Васильевич патша ирĕк панипе, Гурій архіерей Зилантов тийекен монастыр тутарнă. Ҫав монастырти монахсем, халăха кĕнекесем вуласа кăтартса, аҫасене ҫырăва вĕрентсе, нумайĕшне Христос Туррăмăр йенне ҫавăрнă. Таса Гурій мĕн пур ĕмĕрне суйа тĕнлĕ халăхсене Христос тĕнне ҫавăрасшăн тăрăшнă. Вăл тăрăшнипе нумайĕшĕ Христоса ĕненсе тĕне кĕнĕ. Св. Гурій хăй тĕрмере асап курнине

астуса пур хĕн-хур куракан çынсене те вăй çитнĕ таран пулăшма тăрăшнă.

Пурăнăç çитмен çынсене, тăлăх арăмсене, тăлăх аҫасене пулăшма вăл хăй ҫунне пама хатĕр пулнă. Таса Герман унăн пурăнăçĕ çинҫен акă çапла çырса хăварнă: «Таса Гурій ыйткалакансене тăрантса, пурăнăç çитменнисене пулăшса, вăйсăррисене, тăлăх арăмсене, тăлăх аҫасене пур инкекрен хăтарса вĕсемшĕн хута кĕрсе пурăнҫĕ“, тет.

Хусанти Собор ҫиркӳне таса Гурій тутарса хăварнă. Таса Гурій хусанта сакăр çул та тăхăр уйăх архіерей пулса танă (1555—1563 ç.) Хытă типĕ тытнипе, пĕр май кĕлĕре тăрса хăйне асаплантарни, тата суйа тĕнлĕ халăхсене ҫăн тĕн йенелле çавăррасшăн тăрăшни унăн сывлăхне пĕтернĕ. Вăл виçĕ çул ури çине тăраймийех сывăмар выртнă. Сывăмар пулсан та унăн кăмăлĕ ҫиркӳ йеннех туртнă. Ăна ҫиркĕве çĕклесе çитере çитере усранă. Ҫирлени виçĕ çул иртсессĕн, 1563-мĕш çулта раштав уйăхин (декабрĕн) пиллĕкĕмĕш кунĕнҫе Гурій хăй ҫунне лăппăн Турă аллине панă. Унăн ӳтне Спасскій монастырĕнҫе пытарнă. Унăн ӳҫĕ çĕрте 52 çул выртнă. Вăтăр икĕ çултан унăн тупăкне уçса пăхнă та унта мvро çăвĕ туллийех пулнă. Унăн ӳҫĕ те, тумтирĕсем те, тупăкĕ те пĕрре те çĕрмен. Таса Гурій ӳтне тупнă ҫух ун çинҫе пулнă риза халĕ те Собор ҫиркӳнҫе Св. Гурійĕн çĕрмесĕр тăракан таса ӳҫĕ патĕнҫе тăрат.

## Таса архіерей Варсонофій пурăнăçĕ.

Христос çуралсан пин те тăвată çĕр тăхăр вун пилĕк çул (1495) иртсен Мускав çывăхĕнҫе, Серпухов йатлă хулара, пĕр Василій йатлă священникĕн ывăл аҫа çуралнă. Тĕне кӳртнĕ ҫух ăна Василій тенĕ. Çул çитсен ашшĕ ăна пĕр ăслă çын аллине çырăва вĕрентме панă.

Вăл вăхăтра çырăва вĕренекенсене часослов, псалтир тата турă—кĕнекесем кăна вулама вĕрентнĕ. Çавăнпа Василійĕн ҫĕрине çамрăклах ырă шухăш, Турра йурас шухăш, кĕрсе выранаçнă.

Турă Хăй суйласа илнĕ çыннисене вутра шăратса кăларнă ылттăн пек, тĕрлĕ асаппа хĕн-хур кăтартса, тӳсĕмлĕхе вĕрентсе ҫунĕсене тасатат. Çапла Турă Василійе те малтан асап кăтартса

сăнанă. Василій вун-çиḑĕ çула çитсен Крымри тутарсем вырăсемпе вăрçă кăларнă. 1512-мĕш çулта вĕсем Василійе тыткăна илнĕ. Василій тыткăнра Турра пĕрре те ўпкелемесĕр хĕн-асапа ḑăтса, Турра кĕл-туса ḑунне лăплантарса пурăннă.

Вăл акă çапла кĕл-тунă; „Ей Турă, Есĕ асап кăтартнине тўсекен çын телейлĕ, Есĕ манăн Туррăм, манăн ḑунăм санăн çумна çыпçăнḑĕ,“ тенĕ. Çав тĕрлĕ йывăр асапсем Василійшĕн, вăл Турă çине шаннă тăрăх, йывăр пек те туйăнман. Вăлуншăн Турра тав-тунă. Тыткăнра Турă ирĕкĕпе тăнине пĕлсе вăл тутарсем тем тĕрлĕ йывăр ĕç хушсан та, вĕсене йăвашшăн ḑунтан тăрăшса туса тăнă. Тутарсем çав Христос тĕнĕпе пурăнакан ḑурашăн, ăна тăрантса, тумлантарса канлĕ усрасшăн пĕри те тăрăшман.

Ăна тăраниḑḑен çиме те паман. Çавăнпа Василій çамрăклах типĕ тытса ḑаруллă пурăнма вĕреннĕ. Турă мана тыткăнран хăтарсан монастыре кайăп тесе сăмах панă. Василій тăрăшса ĕçленипе унăн ырă пурăнăçĕнḑен тутарсем тĕлĕннĕ. Вара вĕсем ăна пурăнма ирĕке кăларнă. Тутарсем хушшинḑе пурăнса вăл тутарсенĕн ḑĕлхине лайăх вĕреннĕ. Тутарла пĕлни Хусанта тутарсене вĕрентме ăна питĕ усăллă пулнă. Виçĕ çул иртсен аппĕ ывăлĕ ăçта пурăннине пĕлнĕ те тутарсенḑен укçа тўлесе Василійе кайалла илнĕ. Василій Мускава тавăрăннă та Андроников тийекен монастыре кĕнĕ. Монаха кĕрсен ăна Варсонофій йат хунă. Монастыре вăл хăйне питĕ хытă тытса усранă. Унăн ыра пурăнăçĕ çинḑен Макарій Митрополитпа Иван Васильевич патшана хыпар çитнĕ. Çавăнпа ăна патша хушнипе Пĕсношри таса пурăнăçлă Николай йаḑĕпе тунă монастыре игумена кўртнĕ. Таса Варсонофій çав монастырте пурăннă вăхăтра Іоанн Грозный тийекен патша, хăй ḑирлĕ вăхăтра сăмах панă тăрăх, унта Турра кĕл-тума пынă.

Патшана таса Варсонофій пурăнăçĕ питĕ кăмăла килнĕ. 1555 çулта сăваплă Гурійе Хусана архіерейе кўртсен, унпа пĕрле тутарсене вĕрентме ăна пулăшса тăма таса Варсонофійе Хусанти Спасскій монастыре архимандрите кўртсе йанă. Вăл монастыр унḑен пулман, çавăнпа ăна Св. Варсонофійĕн пăхса тутарттармалла пулнă. Хусана пырсан таса Варсонофій Спасскій монастыре тума тăрăша пуçланă: ḑиркў, монахсем валли çурт, йĕри тавăра хўме тутарнă. Малтанах унта ултă монах анḑах пулнă. Вĕсем пурте Пĕсношри монастыртен Хусана хăйсенĕн йуратнă игуменĕ Варсонофійпе пынă. Таса Варсонофійе йуратса, унтан уйăрăлас-

шăн мар, вĕсем йут çĕре Христос тĕнне курайман тутарсем пурăнакан çĕре куçнă.

Турă тивлеҫĕпе, таса Варсонофій кĕллипе монастырте монахсем нумайланнăçемĕн нумайланса пынă. Монастыр йĕрки унта таса Варсонофій Пĕсношри монастырти пекех тунă. Ĕмĕрне таса Варсонофій Турра йурăхлă пурăнăçпа ирттернĕ: типĕ тытса, Турра кĕл-туса, йывăр ĕç ĕçлесе пурăннă. Çынсенҫен вăрттăн, тумтир айĕнҫе ӳтне асаплантарас тесе ыраттаракан йывăр тимĕр йапала çыхса çӳренĕ. Ырă пурăнăç йĕркине çынсене вăл хăй ĕçĕпе кăтартса пынă. Нумай суйа тĕнлĕ çынсене Турă йенне çавăрса тĕне кӳртнĕ. Турă тивлеҫĕпе вăл çынсенĕн ҫирĕсене тӳрлетме пултарнă. Вăл таса Гурійе итлесе ăна пăхăнса тăнă.

1567 çулта таса Варсонофійе Твер хулине архіерейе кӳртнĕ. Твер хулинҫе пурăннă ҫух вăл пĕр укçасăрах тĕрлĕ ҫирсене тӳрлетсе тăнă. Вăл Твер хулинҫе архіерейре тăнă вăхăтра, тĕрлĕ çĕрте, йĕри тавăра хăрушă сикекен ҫир (мур) çӳренĕ. Нумай хуласем, йалсем çынсемсĕр, ҫиркӳсем священниксемсĕр тăрса, пушанса йулнă.

Твер кĕпĕрнинҫи, Варсонофій аллинҫе тăракан çынсем унăн кĕллипе ҫиртен (муртан) хăтăлса йулнă. Варсонофій 80 çула çитсен Твер хулинҫен хăй тутарнă Хусанти Спасскій монастыре куçарма ыйтнă. Ăна вара куçарнă.

Ватти çитнипе ҫирлĕ пирки вăл ҫиркĕве утса çитме пултарайман, çавăнпа ăна ҫиркĕве унăн вĕренекенĕсем çавăтса çӳренĕ. Вилес умĕн вăл Турă ӳҫĕпе йунне ăша илнĕ те пушă уйăхин (апрĕлĕн) вунпĕрĕмĕш (11) кунĕнҫе 1575 çулта ҫунне Турра канлĕн панă. Унăн ӳтне Спасо-Преображенскій монастырте таса Гурійпе йунашар пытарнă.

1595 çулта ҫăн тĕне тытса тăракан патша Θеодор Іоаннович хушнипе Хусанта Спасскій монастырте ҫул ҫиркӳ лартма тытăннă. Çав ҫул ҫиркĕве ĕлĕкхи йывăç ҫиркӳрен сарлакарах тăвасшăн пулнă. Çавăнпа ҫиркӳ никĕсĕ таса Гурійпе Варсонофій тупăкĕ тĕлне лекмелле пулнă.

Никĕс айне ан пулҫҫăр тесе вĕсенĕн тупăкĕсемпе шăмми шаккисене кăларса урăх тĕле пытарас тенĕ. Вара авăн уйăхин (октябрĕн) тăваттăмĕш кунĕнҫе 1595 çулта никĕс вырăнне ҫава пуçласан таса Гурійпе Варсонофійĕн пĕрре те çĕрмесĕр ларакан тупăкĕсене тупнă. Спасскій монастыре пăхакан Арсеній йатлă

Архимандрит Хусанти Митрополит Гермоген патне васкаса кайса сӗрмесӗр ларакан тупӑксем гупни ҫинҗен каласа кӑтартнӑ. Митрополит Хусанти священниксене пуҫтарса литургія кӗлли тунӑ та литургія хыҫҫӑн паннихида туса, мӗн пур священниксенӗн ушкӑнӗпе таса Гурійпе Варсонофій тупӑкӗсем патне кайнӑ. Гермоген Митрополит сӗрмесӗр ларакан тупӑксене курсассӑн тӗлӗнсе кайнӑ. Халӑх умӗнҗех таса Гурій тупӑкне уҫма хушнӑ. Тупӑка уҫсан питӗ тӗлӗнмелле ӗҫ курӑннӑ. Тупӑк туллийех ырӑ шӑршӑллӑ мүро ҫӑвӗ пулнӑ. Сӑваплӑ Гурійӗн сӗрмен ӳҗӗ мүро ҫинҗе пӗрре путмасӑр тӑнӑ. Унӑн ҫинҗи риза пӗрре те сӗрмен, ҫӗнӗ пекех пулнӑ. Таса Гурійӗн пуҫӗ айӗнҗе ҫыхса пӗтермен монах ҫӗлӗкӗ (клобук) пулнӑ. Ҫавӑн ҫинҗен Варсонофійпе пурӑннӑ ватӑ монахсем Евфимійпе Евстратій акӑ ҫапла каласа кӑтартнӑ: „Варсонофій атте ҫав клобука таса Гурій валли хӑй ҫыхма пуҫланӑҗҗӗ те Гурій вилеҗҗен пӗтерейменӗ. Вара вӑл таса Гурійе җунтан—вартан йуратнӑ тӑрӑх, ҫав клобука тупӑк ӑшне Гурій пуҫӗ айне хуҗӗ“, тенӗ. Ҫав клобук та пӑртак та сӗрмен. Унтан Варсонофій тупӑкне уҫса пӑхнӑ. Унӑн та ӳҗӗ пӗрре те сӗрмен; пӑртак урисем анҗах сӗрнӗ.

Шӑммисем сыпӑкӗсенҗен ҫапах та пӗрре те саланман. Вара таса Гурійпе Варсонофій ӳҗӗсене урӑх ҫӗнӗ тупӑксем ҫине илсе хунӑ та паннихида кӗлли тунӑ. Пурте пырса пуҫҫапҗӑр тесе тупӑксене витмесӗр лартнӑ. Ҫак ӗҫ ҫинҗен патшапа Іов патріарха пӗлтернӗ. Вӗсем вара Гурійпе Варсонофійӗн ӳҗӗсене Спасскій монастыре лартма хушнӑ. Ҫавӑнпа вӗсене иккӗшне Спасскій монастыре лартнӑ. Унта вӗсем 35 ҫула йахӑн пӗрле тӑнӑ. 1630 ҫулта ҫу уйӑхин (Іюнӗн) ҫирӗмӗш кунӗнҗе Хусанти Митрополит Матѳій таса Гурій ӳтне Спасскій монастыртен Хусанти Благовѣщенскій Каѳедральный тийекен сӑваплӑ Гурій тутарнӑ Собор җиркӳне куҫарса лартнӑ.

Сӑваплӑ Гурій ӳтне Спасскій монастыртен Собор җиркӳне илсе кайнӑ җух пӗтӗм Хусан хулине ырӑ шӑршӑ саралнӑ; пур тӗне кӗнӗ ҫынсем те хӗпӗртесе хытӑ сасӑпа: «Турӑ тасасем хушшинҗе тӗлӗнмелле ӗҫ тӑваҭ; Турӑ Хӑйӗн сӑваплӑ ҫыннисене мухтава кӑлараҭ», тенӗ. Таса Гурійпе Варсонофій ӳҗӗсенҗен нумай хӑватсем пулнӑ. Сывӑмар—җирлӗ ҫынсем җирӗссҗен тӳрленнӗ; суккӑр ҫынсем куракан пулнӑ. Гермоген хӑй Хусанта митрополитра тӑнӑ вӑхӑтра пулнӑ хӑватсене хӑшне-хӑшне ҫырса хӑварнӑ.

Вăл вăхăтра таса Гурійпе Варсонофійĕн тупăкĕсем Спасскій монастырте пĕр пĕринҫен инçе ларман. Çавăнпа пуççапакансем вĕсене иккĕшне те пуççапнă. Хăватсем иккĕшĕнҫен те пулнă. Гермоген митрополит çырнă хăватсем акă çаксем:

1. Хусанти Каѳедральный Соборта Іоанн йатлă ключарĕн куçĕсем пит пăсăлнă. Куçсем сурнипе вăл апат та çийеймен.

Таса Гурійпе Варсонофій тупăкĕсене ҫи малтан уçнă ҫух вăл унта пынă та куçĕсемпе сĕртĕнсе вĕсенĕн ўҫĕсене ҫуп-тунă. Унăн куçĕсем сурма çавăнтах ҫарăннă, нихăçан та ыратман куç пекех пулнă.

2. Арзамас уйасĕнҫе, Ознобишино йатлă йалта пĕр аслă улпут ывăлĕ Ѳеодор Прокофьевъ Кашкаров йатлăскер 30 ерне куçпа ҫирлесе выртнă. Куçĕсем ним те курми пулнă. Унăн кукамăшĕ Параскева Аѳанасьева Болотина çавна илтсен аҫанăн амăшĕ патне таса Гурій тупăкĕнҫен илнĕ мѵро çăвне парса йанă.

Амăшĕ мѵропа аҫанăн куçне сĕрнĕ те ывăлийĕн куçĕсенҫен пулă хуппи пек шур илни хăпăнса ўкнĕ те куçĕсем куракан пулнă. Унтан ўлĕмрен тек нихăçан та пăсăлман.

3. Ростов хулинҫи пĕр Иван Филиппов улпут куçĕ сурнипе пуç ыратса питĕ хытă асапланнă. Пур те, унăн куçĕ пĕтет ĕнтĕ, тенĕ.

Вăл Спасскій монастыре кайса Турра кĕл-тунă та таса Гурійпе Варсонофійе тилмĕрсе, таса Гурій тупăкĕнҫи мѵропа çупа пуçĕпе куçне сĕрнĕ.

Çавăнтах вăл халиҫҫен нимĕскер ыратман çын пекех сывă халлĕн кайнă.

4. Хусан кĕпĕрнинҫе, Анатыш йатлă салара пĕр Иван йатлă çыннăн Андрей йатлă ывăлийĕн куçĕ курми пулнă. Ашшĕпе амăшĕ çăлакан Туррăмăра, Турă амăшне, таса Гурійпе Варсонофійе кайса кĕл-тăвăпăр тесе сăмах панă. Çапла сăмах парсан тепĕр куннех ывăлийĕн куçĕ кура пуçланă. Вĕсем хăйсем сăмах панă тăрăх Спасскій монастыре кайса кĕл-тунă та, ывăлийĕн куçĕ пĕтĕмпех тўрленнĕ.

5. Пĕр Агриппина йатлă хĕр-арăмăн куçĕсем сурса пĕтĕмпех суккăр пулса ларнă. Вăл Святойсем Гурійпе Варсонофійе тилмĕрекене Турă пулăшу параҭ тенине илтнĕ те Тимоѳей йатлă ывăлне Спасскій монастыре кайса таса Гурійпе Варсонофійе мо-

лебен туса унтан мvро ҫӑвӗ илсе тавӑрӑнма хушнӑ. Хӑй килте Св. Гурійпе Варсонофійе кӗл-туса тӑнӑ.

Ывӑлӗ мvро ҫӑвӗ илсе тавӑрӑннӑ та, амӑшӗ ӗненсе унпа куҫӗсене сӗрнӗ. Куҫӗсем унӑн ҫавӑнтах куракан пулнӑ.

6. Карадулей йатлӑ салара пӗр Григорій йатлӑ ҫыннӑн куҫӗсем сурса курми пулнӑ. Вӑл таҫа Гурійпе Варсонофій ӳҭӗсенҭен усӑ пулаҭ тенине илтнӗ те Спасскій монастыре кайса таса Гурійпе Варсонофійе молебен тутарнӑ. Таса Гурій тупӑкӗнҭен мvро илсе куҫӗсене сӗрнӗ, куҫӗсем ҫавӑнтах тӳрленнӗ.

7. Пӗр Михаил Никифоров йатлӑ ҫын вӑрманта вут татнӑ ҫӗртех сасартӑк суккӑр пулнӑ. Вӑл Гурійпе Варсонофійе кӗл-тӑва пуҫланӑ. Кӗл-тӑва пуҫласан пӗр куҫӗ кура пуҫланӑ. Бара вӑл васкаса Гурійпе Варсонофій ӳҭӗсем патне кайса кӗл-туса вӗсенеҭуп тунӑ та тепӗр куҫӗ те ӗлӗкхи пекех куракан пулнӑ.

8. Пӗр Иван Тарасов йатлӑ Хусанта пурӑнакан ҫыннӑн вӑрмана кӑмпана кайсан сасартӑках ури ҭирле пуҫланӑ. Хытӑ ҭирленипе вӑл ури ҫине те тӑрайман. Ҫавӑнпа ирӗксӗрех вӑрманта ҫӗр выртмалла пулнӑ. Тепӗр кунне вӑл сӑваплӑ Гурійпе Варсонофійе кӗл-тӑва пуҫланӑ; вара унӑн ури ҭирлеме ҭарӑннӑ та пӑр пек хытса ларнӑ. Пӑртак тӑрсассӑн ури ҫывӑрса кайнӑ та, каллах ӗлӗкхи пекех тӳрленсе ларнӑ. Вӑл вара киле тавӑрӑннӑ.

9. Мускаври Воскресенскій тийекен ҭиркӳре пӗр Басилій йатлӑ священникӗн ури ҭирлесе хутланса кайнӑ. Ҫав вӑхӑтра Хусанти Спасскій монастырти архимандрит Мускавра пулнӑ. Василій йатлӑ священник Арсеній архимандритран таса Гурій тупӑкӗнҭи мvрона ыйтнӑ. Вӑл ӑна панӑ. Урине мvропа сӗрнӗ те ури ҫавӑнтах тӑсӑлнӑ та ӗлӗкхи пекех сывалнӑ.

10. Хусанта пӗр атӑ ӑстийӗн Евдокія йатлӑ хӗрӗ пӗтӗм ӳт шӑм-шакки сурнипе асапланса ури ҫине те тӑрайман, нихӑҫан та сываласси сунман.

Вара унӑн амӑшӗ Гурійпе Варсонофійе кӗл-тунӑ та, вӗсенӗн тупӑкӗнҭи мvропа хӗрийӗн мӗн пур ӳтне сӗрнӗ. Хӗрӗ ҫав сехетрех тӳрленнӗ.

11. Пӗр Савва йатлӑ хуҫанӑн ури те алли те ҭӑлах пулнӑ. Пурӑнсан-пурӑнсан ӑнӗ (ӑсӗ) те пӗтнӗ. Килйышӗсем ӑна таса Гурійпе Варсонофій ӳҭӗсем патне, мӗн пур шанҭӑкне вӗсем ҫине хурса, унта илсе кайнӑ. Молебен ыҫҫӑн тупӑкри мvропа сӗрнӗ те сывӑмар хуҫа ҫавӑнтах сывалнӑ.

12. Пĕр Іоанникій йатлă ыйткалаканăн алли ђăлах пулнă. Вăл таса Гурійпе Варсонофій тупăкĕсем патне пынă та, алă тӳрленсен çак монастыре монаха кĕрĕп тесе сăмах панă та хăват тăвакан ӳђĕсене ђуп тунă. Унăн алли сасартăках тӳрленнĕ.

Анђах вăл хăй сăмахĕ çине тăман. Çавăншăн ăна Турă асăп кăтартмасăр хăварман. Темĕн ђухлĕ вăхăт иртсен унăн ури ђăлах пулнă. Вăл утса çӳреймен, аллисемпе ђăркуççисем çинђе анђах ӳпеленсе (шуса) çӳренĕ. Пилĕк çул иртсен вăл хăй сăмах панине астуса илнĕ те Спасскій монастыре ӳпеленсе кайнă. Монахсенĕн пуçлăхне, монаха ил тесе куç-çулĕпе йĕрсе тилмĕрнĕ. Монахсенĕн пуçлăхĕ ăна монаха кӳртнĕ. Ыйткалакан ђиркĕве ӳпеленсе пынă та Турă амăшĕ сăнне, таса Гурійпе Варсонофій турăшне ђуп-тунă. Унăн урисем çавăнтах тӳрленнĕ те, вăл çӳре пуçланă. Хавасланнипе Турра мухтаса вăл сиккеленĕ.

13. Сăвапла Гурійпе Варсонофій ӳтне тупсан вĕсенĕн умĕнђе вулама тăвата монаха хушнă. Вĕсем хушшинђен пĕри Іоасаф йатли ĕненмесĕр Св. Гурій тупăкне уçса пăхма шухăшланă. Çапла шухăшласанах унăн алли вут пек пĕçере пуçланă. Хытă сурнипе алли туртăнса хутлана пуçланă. Вăл вара хăй шухăшĕпе Турра çилентернине ăнласа илнĕ те, Гурійпе Варсонофійе тилмĕре пуçланă. Вара алли каллах тӳрленнĕ, сурма та ђараннă. Вăл тата такăçанах сивĕ ђирпе асапланса пурăннă.

Аллине тӳрлетнĕ хăвата курсассăн вăл сăвапла Гурійпе Варсонофійе сивĕ ђиртен тасатăр тесе тилмĕре пуçланă. Сивĕ ђир те çавăнтан вара ăна текех тытман.

14. Хусанта пĕр Алексѣй йатлă прикашђăкăн арăмĕя Марія Мускавра пурăннă. Унăн пуçĕ, алли-ури, мĕн пур шăм-шакки сурнă. Алексѣй прикашђăк çавна пĕлсен Спасскій монастыре кайнă та, Гурійпе Варсонофійе молебен тутарнă. Молебен хыççăн сăвапла Гурій тупăкĕнђи миро çуне ыйтса илнĕ те, Мускава арăмĕ патне çак миропа сĕр тесе çырса парса йанă. Арăмĕ çав миропа хăй ӳтне сĕрнĕ те унăн суранĕ çав кунах ђарăннă.

15. Іов Патріарх патĕнђе пурăнакан Арсеній йатлă монахăн нумайранпа кăкăрĕ хĕссе сурнă, тата шыç ђир те пулнă. Вăл вăхăтра Хусанти Спасскій монастырти Арсеній архимандрит Мускавра пулнă. Вăл хăйпе пĕрле таса Гурій тупăкĕнђи миро çăвне илсе пынă. Монах миро çăвне ыйтса илнĕ те пĕтĕм ӳт-çурăмне

сĕрнĕ. Сĕрсенех вăл тасалнă. Çак хăвата Іов патріарха каласа кăтартнă, вăл вара йулашки миро çăвне хăйне хăварнă.

16. Кострома хулинҫе пĕр Кирилл Васильев йатлă çыннăн çурăм шăммипе пилĕкĕ сурнă. Çавăнпа ларма та çывăрма та пултарайман. Таса Гурійпе Варсонофій хăват тăваççĕ тенине илтнĕ те Гурійпе Варсонофій сăнне илĕп тесе сăмах панă. Таса Гурійпе Варсонофійе молебен тутарнă та çав сехетрех вăл ҫирĕнҫен тӳрленнĕ; халиҫҫен нихăçан та ҫирлемен çын пекех пулнă.

17. Кадышево йатлă йалта Өеодор йатлă çыннăн арăмĕ Соломонія усал сывлăш аптăратнипе ҫас ҫасах питĕ асапланнă. Унăн упăшки ăна тӳрлетес тесе йумăçа çӳресе нумай укçа пĕтернĕ; нимĕскер усă та курман. Çапла Турра йурăхсăр ĕç тунине астуса илнĕ, çылăха каçар тесе Турра йăлăна пуçланă. Вара ăна тĕлĕкре икĕ хĕр-арăм—монах Спасскій монастыр хапхи патĕнҫе курăнса каланă: „есĕ таса Гурійпе Варсонофійе кĕл-ту“, тенĕ. Айхинҫен вăрансавăл тĕлĕкре мĕн курнине арăмне каласа кăтартнă та арăмне илсе кайса таса Гурійпе Варсонофій ӳҫĕсем патĕнҫе молебен тутарнă. Унăн арăмĕ çавăнтах ҫирĕнҫен турленнĕ.

18. Ермолай Софронов Сумароков йатлă çынна усал сывлăш асаплантарнă.

Ăна Спасскій монастыре илсе пынă та ҫиркĕве вĕренпе çыхса темиçе çын аран—аран илсе кĕнĕ. Ҫиркӳре ăна молебен тунă ҫухне таса Гурійпе Варсонофій тупăкĕ патĕнҫе тытса тăнă.

Молебен туса пĕтерсессĕнех унтан усал сывлăш тухнă та ăна ăс кĕнĕ. Вăл йĕре—йĕре кĕл-тунă. Сасартăках ҫĕлхесĕр пулса тăнă, нимĕн калаçайман.

Çак ĕç каçхи кĕлĕ вăхăтĕннҫ пулнă. Кайран вăл ҫĕлхи уçăлсан акă çапла каласа кăтартнă. Тепĕр кунне епĕ ирхи кĕлĕре таса Гурій тупăкра ларнине куртăм; вăл мана, манăн тăванăм Варсонофійе кайса ҫуп ту, терĕ. Епĕ ҫуп турăм та вăл мана каллах каларĕ: пирĕн Туррăмăр Іисус. Христос Хăйĕн ҫăн таса Амăшĕ кĕллипе сана хĕрхентĕр те, санăн ҫĕлхӳне тӳрлеттĕр, терĕ те мана пиллерĕ те курăнми пулҫĕ, тенĕ. Вара сывмар—ҫĕлхесĕр пулнă çын ҫирĕнҫен те тӳрленнĕ, ҫĕлхи те уçăлнă, вăл калаçа пуçланă.

19. Пĕр улпут ывăлĕ Өеодор Оклячеев патшалăх ĕçĕнҫе тăнă вăхăтра тытамак тытнипе питĕ асапланнă. Ăна киле илсе тавăрăннă ҫух Хусан патĕнҫен иртсе каймалла пулнă. Хусанти таса Гурійпе Варсонофій кĕллипе ҫиртен тӳрленеççĕ тенипе илт-

сессӗн вӑл хӑйне Хусана илсе кайма хушнӑ. Ӑна Спасскій монастыре илсе пынӑ. Вӑл Ҫӑлакан Туррӑмӑра молебен тутарнӑ. Сӑваплӑ Гурійпе Варсонофій ӳҫӗсене ҫуп-тунӑ. Таса Гурій тупӑкӗнҫи мvро ҫӑвӗпе сӗрӗннӗ те унӑн тытамакӗ тытма пӑрахнӑ, ӳлӗмрен нихӑҫан та тытман.

20. Пӗр Петр йатлӑ Холмогор ҫынни тар ҫирпе пӗлеймийех выртнӑ. Тус-йышӗсем ӑна Спасскій монастыре илсе кайса молебен тутарнӑ та сӑваплӑ Гурійпе Варсонофій ӳтне ҫуп тутарнӑ. Вӑл ҫавӑнтах сывалнӑ та килне питӗ хавасланса тавӑрӑннӑ.

21. Пӗр Ирина Кошкарова тийекен улпут арӑмийӗн куҫӗ пӑсӑк пулнӑ. Вӑл таса Гурій тупӑкӗнҫи мvропа сӗрсе куҫне тӳрлетнӗ. Пӑртак вӑхӑт иртсен ҫав арӑм упӑшки вилнӗ тенине илтнӗ те сасартӑк хӑранипе ухмаха йернӗ. Унӑн пӗлӗш-хурӑнташӗсем унӑн ӳтне св. Гурій тупӑкӗнҫен илнӗ миропа сӗрнӗ те вӑл вара тӳрленнӗ.

22. Сӗвери Успенскій монастырте пӗр Иродіон йатлӑ монах тӑхӑр уйӑх шӑм-шак ҫирленипе хусканаймасӑр выртнӑ. Таса Гурійпе Варсонофій ҫиртен тӳрлетет тенине илтсессӗн вӑл мӗн пур вӑйӗпе Турӑ умӗнҫе манӑн ҫире тӳрлетме кӗл—тӑвӑр тесе вӗсене тилмӗрнӗ. Вӗсенҫен кайран Сӗвери таса Германа та тилмӗре пуҫланӑ. Пӗрре вӑл ҫӗрле Архіерей тумтирне тӑхӑннӑ виҫӗ ҫын курнӑ.

Вӗсенҫен пӗри каланӑ: Иродіон, куратӑн-и ӗнтӗ? епир сан патна есӗ ҫиртен тӳрленесси ҫинҫен калама килтӗмӗр, саншӑн епир Христос Туррӑмӑр, есӗ халӗ сывӑ, текех ҫылӑха ан кӗр, ҫылӑха кӗрсессӗн тата ытларах асапланӑн“, тенӗ. Шӑм-шак суракан ҫын ирхине тӑнӑ та хӑй сывалнине сиснӗ те хӑй мӗн курнине, хӑй сывалнине игуменпа монахсене каласа кӑтартнӑ. Вӗсем вара пур те Турра мухтанӑ.

## Хусанта архіерей пулса пурӑннӑ таса Герман пурӑнӑҫӗ.

Таса Герман Садыров тийекен улпут йӑхӗнҫен ҫуралнӑ. Тӗне кӳртнӗ ҫух ӑна Григорій тенӗ. Вӑл ашшӗ—амӑшийӗн пӗҫҫен пӗр ывӑл анҫах пулнӑ. Ҫавӑнпа ашшӗпе амӑшӗ ӑна кил-ҫурт тытса усраттарса унтан аҫа-пӑҫа курасшӑн пулнӑ. Ҫамрӑклах

Григорій Турăран хăракан таса пурăнăçлă аҫа пулнă; вăхăта Турра кĕл-туса, типĕ тытса ирттернĕ. Ашшĕ килĕнҫе вăл 25 çул пурăннă. 25-мĕш çулта хăйĕн монастыре кайас шухăшне ашшĕпе амăшне каласа кăтартнă.

Унăн ашшĕпе амăшĕ те таса пурăнăçлă çынсем пулнă; çавăнпа вĕсем унăн ырă шухăшне хирĕç пыман.

Григорій Волоколамскій тийекен монастыре монаха кĕнĕ; ăна унта Герман йатлă хунă. Герман монастырте ҫунне çăласшĕн тата ытларах тăрăшнă. Бăл хăйне хăй пуринҫен кайа хунă. Германпа пĕр вăхăтрах вăл монастырте таса Гурій те пурăннă, кайран таса Гурійе унтах игумена кӳртнĕ. Таса Германпа таса Гурій пĕр монастырте пурăнса, пĕр шухăшлă пулса, Турра йураса çӳлти патшалăха кĕме тивĕçлĕ пуласҫĕ тесе тăрăшнă. Таса Гурійе Хусана архіерейе йанă ҫух, ăна пулăшса тăма таса Германа аттенĕн ырă пурăнăçне курса, ăна Старицкій монастыре игумена кӳртнĕ. Вăл игумена кĕресшĕн пулман, çав монастырти монахсем тилмернĕ тăрăх анҫах килĕштернĕ.

Икĕ çул çур хушшинҫе Герман атте тăрăшса Старицкій монастыре илем кӳртнĕ. Йăвап кăмăллăскерĕн пуçлăх пулса тăрасси килмен, çавăнпа вăл икĕ çул çурă иртсессĕн каллах Волоколамскій монастырне кайса ахаҫ монах пек пурăннă.

1555 çулта таса пурăнăçлă Гурійе Хусана архіерейе кӳртсессĕн, ăна пулăшса тăма таса Германа Сĕве хулинҫи Успенскій монастыре архимандрита кӳртнĕ.

Вăл монастыр унҫен пулман, çавăнпа Герман аттенĕн хăй тăрăшса тутармалла пулнă. Сĕве çывăхĕнҫе тутарсем, ҫăвашсем, çармăçсем пурăннă, çавăнпа монахсем пуçтарасси те каскалакан ăста çын тупасси те пит хĕн пулнă.

Тутарсем, ҫăвашсем, çармăссем монастыр тума кĕрешесшĕн пулман. Иван Василіевич патша таса Германа монастыр тума кирлĕ ҫухлĕ укçа панă. Турă пулăшнипе таса Герман монастыре туса пĕтернĕ. Вăл тăрăшса тутарсене, ҫăвашсене, çармăссене нумайĕшне тĕне кӳртнĕ. Нумайĕшĕ ун патне ăс ыйтма пынă, вăл пурне те ăс парса Турă çинҫен вĕрентсе йанă. Сăвапла Герман суйа тĕнлĕ çынсене Христос Туррăмăр йенне питĕ нумай çавăрни çинҫен ҫап сарăлнă.

Ун çинҫен патшапа митрополит та илтнĕ. Сăвапла Гурій вилсен Турă шухăшлă Германа Мускава ҫĕнтерсе ăна таса Гурій

вырӑнне 1564 ҫулта (март) уйӑхин 12 кунӗнҫе Хусана архіерейе кӳртнӗ. Вӑл архіерейре хӑй умӗнҫи таса Гурій пекех тӑрӑшса икӗ ҫул пурӑннӑ. Икӗ ҫул иртсен 1566 ҫулта ӑна Иван патша митрополита кӳртес тесе Мускава ҫӗннӗ. Мускава пырсан вӑл патшана каланӑ: „опричниксене (патша умӗнҫе ҫын ҫинҫен елек парса, ҫычна нимӗскер айӑпсӑрах вӗлерекенсене) ҫар, пӑрахӑҫа хӑвар“, тенӗ. Патша ҫавӑншӑн ӑна ҫиленсе ӑна хӑваласа кӑларма хушнӑ. Опричниксем ӑна хӑваласа кӑларнӑ. Патша ҫиллипех кайас мар тесе вӑл Мускавах йулнӑ. 1568 ҫулта ноябрӗн 6-мӗш кунӗнҫе таса Герман хӑй ҫунне Турӑ аллине панӑ (вилнӗ). Унпа пӗрле Мускавра икӗ архимандрит пулнӑ: пӗри Сӗвери—Иродіон, тепӗри Хусанти—Іеремія. Вӗсем ӑна йӗре—йӗре пытарнӑ. Таса пурӑнӑҫлӑ ҫыннӑн йаҫӗ ӗмӗрех пурӑнаҭ. Темиҫе ҫул иртсессӗн таса Германӑн ҫӗрмесӗр выртакан ӳтне тупнӑ. Унӑн умӗнҫе ӗненсе кӗл-тӑвакансем нумайӗшӗ ҫирӗсенҫен тӳрленнӗ. Ун ҫинҫен Сӗве хулинҫи ҫынсем илтнӗ те, Мускава кайса Ѳеодор Иванович патшапа Іов патріархран, епир йуратнӑ архіерейе Сӗве хулине, хӑй тутарнӑ монастыре куҫарттарма хуш тесе тилмӗрнӗ. Патшапа митрополит вӗсем ыйтнине итленӗ. 1592 ҫулта Сентябрен 25 кунӗнҫе сӑваплӑ Герман ӳтне-шӑммине Сӗвене илсе пынӑ. Ӑна Хусанти митрополит Гермоген хирӗҫ тухса илнӗ. Таса пурӑнӑҫлӑ Герман ӳтне хӑй тутарнӑ Успенскій монастыре илсе кӗрсе лартсассӑн пӗтӗм монастыре ырӑ шӑршӑ сарӑлнӑ. Нумайӗшӗ ҫирпе асапланакансем таса Герман ӳҫӗ патне пырса кӗл-тунӑ та ҫирӗсенҫен тасалнӑ: пӗр Ҫӗрпӳри (Цивильскри) священникӗн ывӑлӗ (Сӗвере канцелярта пурӑннӑ), тата Шаков йатлӑ салари священникӗн хӗрӗ, тата Шупашкар хулинҫи пӗр хӗр-арӑм вӗсем виҫҫӗшӗ те тытамаклӑ усал астаракан ҫирпе аптӑраса пурӑннӑ. Вӗсем таса Герман ӳҫӗ умӗнҫе кӗл-тунӑ та усал ҫирӗсенҫен тасалнӑ. Тата урӑх хӑватсем те таса Герман тупӑкӗ умӗнҫе нумай пулнӑ: Шупашкарти пӗр суккӑр ҫуралнӑ хӗр куракан пулнӑ. Сӗвере пӗр суккӑр тӑлӑх арӑм куракан пулнӑ. Сӗве хулинҫи ҫӗлхесӗр хӑлхасӑр ҫуралнӑ ҫын тӳрленнӗ, тепӗр ҫын тата тар ҫиртен тӳрленнӗ. Тата Сӗвери хула пуҫлӑхин хӗрӗ йун йухакан ҫиртен тӳрленнӗ. Таса Германӑн хӑват тӑвакан ӳҫӗ халӗ те Сӗвери Успенскій монастырте выртаҭ. Унӑн тупӑкӗ патӗнҫе таса Герман тӑхӑнса ҫӳренӗ риза, митра, кӗмӗл хӗрес, тата сӑваплӑ Герман хӑй аллипе каскаласа тунӑ йывӑҫ туйа халӗ те тӑраҫҫӗ.

Хусанти таса Гурій, Варсонофій тата Герман аттесем тутарсене, ђăвашсене, çармăссене тата ытти Хусан таврашĕнђи тĕрлĕ ђĕлхепе калаçса пурăнакан халăхсене нумайĕшне ђăн тĕн йенне çаврнă.

Таса Гурій атте питĕ йăваш, ырă кăмăллă çын пулнă. Пур çынна та вăл лайăх, ђис туса илсе, ăшшăн калаçнă. Суйа тĕнпе пурăнакан ђăвашсем, тутарсем, çармăссем пырсан, кăмăлтан калаçнă. Хĕн-хур куракансене вăл лăплантарнă; ђухăнсене пулăшнă. Тăшмансем пусмăрласран хăтарнă. Ђухăн ђăвашсене, тутарсене хăй патне пырсан ĕçтернĕ, çитернĕ. Христоса ĕненсе тĕне кĕрекенсене Гурій атте тумтирсем, укçасем, çĕрсем парса пулăшнă. Тутар, ђăваш, çармăс ађисене çырăва вĕрентме Зилантов монастырте шкул уçнă. Çав шкултан священниксем, діаконсем, тийеђуксем, ђиркў ĕçне тăвакансем пула—пула кайнă.

Таса Варсонофій пуринђен ытла тутарсене ђăн тĕн йенне çаврнă. Вăл тăрăшнипе нумай тутар Христос Турă тĕнне йышăнса тĕне кĕнĕ. Вăл тутарла калаçма ăста пулнă. Тутарсемпе ђăн тĕн çинђен тутарла калаçнă. Хусанта Спасскій монасырте халĕ те пĕр турăш пур. Çав турăш çине таса Варсонофій Мухаммед тĕнне тытса пурăнакан (çынсемпе) тутарсемпе калаçса тăнипе (çапнă) ўкернĕ. Тутарсем нумайĕшĕ хăйсемех тĕне кĕме шухăш тытнă. Вĕсене таса Варсонофій Спасскій монастырте тĕне кўртнĕ.

Таса Герман атте те суйа тĕнпе пурăнакан çынсене вĕрентсе нумайĕшне тĕне кўртнĕ. Пуринђен ытла вăл ђăвашсемпе çармăссене Христос тĕнĕ çинђен вĕрентнĕ. Ђăвашсемпе, çармăссемпе кăмăллăн калаçнă. Хăйĕн Сĕвери Успенскій монастырте пурăннă ђух нумай ђăваш ăна курма, вăл вĕрентнине итлеме çўренĕ. Таса Герман питĕ тўлек, йăваш, Турра кĕл-тума, ĕçлеме йуратакан çын пулнă. Вăл типĕ тытса, вăрăмăн ђиркўре тăрса, ытти ахаљ ĕçсем туса хăйне-хăй кансĕрленĕ. Архіерей пулсан та вăл кăлатасем алтнă, вутăсем çурнă, шыв йăтнă. Ђăвашсем çак таса çынтан, унăч пурăнăçĕнђен питĕ тĕлĕннĕ. Ђăн тĕн çинђен калаçкаласан нумайĕшĕ, ђăвашсем, тĕне кĕме хăйсемех Германа тилмĕрнĕ. Таса Герман вĕсене Успенскій соборта хăйĕ тĕне куртнĕ.

Тĕне кĕнĕ ђăваш ађисене вулама, çырма вĕрентнĕ. Çырăва хастартарах пĕлекенкенсене вăл ђиркў ĕçне тăвакансем (священниксем, діаконсем, псаломщиксем) тăва—тăва йанă.

---

Отъ Переводческой Коммиссіи Православнаго Миссіонерскаго Общества печатать разрѣшается. г. Казань. 27 марта 1910 года.

Предсѣдатель Переводческой Коммиссіи, Профессоръ Казанской Академіи М. *Машановъ*.

Въ продолженіи настоящаго 1910 года вышли изъ печати **книги на чувашскомъ языкѣ**.

1. Сборникъ проповѣдей на воскресные и двунадесятые праздники (печатается; выйдетъ около 400 стр. цѣной въ 2 р. 50 коп.).

2. **Чувашско-русскій словарь** (выйдетъ около 400 стр.).

3. Краткій **русско-чувашскій словарь** (малаго размѣра: 16 л. ц. въ 10 коп.).

4. Краткій **чувашско-русскій словарь** (малаго размѣра: 16 л. ц. въ 10 коп.).

5. Бесѣда чувашина съ татариномъ о вѣрѣ (около 50 стр. ц. въ 5 коп.).

6. Житіе св. Гурія, Германа и Варсонофія съ **службой** этимъ святителямъ. (Переводъ службы проредактированъ при участіи проф. Казанской Академіи П. А. Юнгерова).

7. Добродѣтельныя женщины (около 32 стр. ц. въ 5 к.).

8. Акафистъ **покрову Пресв. Богородицы**.

9. Объясненіе на четвероевангеліе со стороны смысловой и полемической: противъ ислама и сектантства. Пособіе для пастыря при бесѣдахъ его съ прихожанами — чувашами (выйдетъ около 800 стр.).

10. Книга св. ап. и евангелиста Іоанна Богослова.

11. Законъ Божій для дѣтей съ многими рисунками.

Имѣется въ продажѣ „**Русско-чувашскій словарь**" 640 стр. ц. 2 р.

Требованія на эти изданія слѣдуетъ адресовать такъ: *Казань, Центральная [illegible]*

Въ продолженіи настоящаго **1910 года** выйдутъ изъ печати **книги на чувашскомъ языкѣ:**

1. Сборникъ проповѣдей на воскресные и двунадесятые праздники (печатается; выйдетъ около 600 стр. цѣной въ 2 р. 50 коп.)

2. **Чувашско-русскій словарь** (выйдетъ около 400 стр.)

3. Краткій **русско-чувашскій словарь** (малаго размѣра: 16 д. л. въ 10 коп.)

4. Краткій **чувашско-русскій словарь** (малаго размѣра: 16 д. л. въ 10 коп.).

5. Бесѣда чувашина съ татариномъ о вѣрѣ. (около 50 стр. ц. въ 5 коп.)

6. Житіе св. Гурія, Германа и Варсонофія со **службой** этимъ святителямъ. (Переводъ службы проредактированъ при участіи проф. Казанской Академіи П. А. Юнгерова).

7. Добродѣтельныя женщины (—окол. 32 стр. ц. въ 5 к.)

8. Акафистъ **покрову пресв. Богородицы.**

9. Объясненіе на четвероевангеліе со стороны смысловой и полемической: противъ ислама и сектанства. Пособіе для пастыря при бесѣдахъ его съ прихожанами—чувашами (выйдетъ около 800 стр).

10. Житіе св. ап. и евангелиста Іоанна богослова.

11. Законъ Божій для дѣтей съ многими рисунками.

Имѣется въ продажѣ **„русско-чувашскій словарь“** 640 стр. Ц. 2 р.

Требованія на эти изданія слѣдуетъ адресовать такъ: *Казань. Центральная типографія рядомъ съ циркомъ*, или: *Казань. Крѣпость. Спасо-Преображенскій монастырь. Миссіонерскіе курсы. Преподавателю Николаю Васильевичу Никольскому.*